***Артемьева Тамара Васильевна***
канд. пед. наук, доцент
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии
***Михайлова Светлана Георгиевна***
канд. пед. наук, доцент
ФГБОУ ВО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И.Я. Яковлева»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ЗАУЧИВАНИЕ СТИХОТВОРЕНИЙ С ДЕТЬМИ СТАРШЕГО ДОШКОЛЬНОГО ВОЗРАСТА

***Аннотация****: в статье описана методика процесса заучивания. Раскрыты требования к отбору стихотворений, приемы запомнинания и выразительного чтения. Дан примерный конспект занятия.*

***Ключевые слова****: методика, заучивание стихотворений, старший дошкольник.*

***Аннотаци****: статьяра сăвва пăхмасăр калама вĕрентес ĕçе йĕркелес меслетлĕхе çутатнă. Сăвва тĕрĕс суйласа илмелли çинчен системе калянă; ас туса юлма, сăнарлă калама хăнăхма пулăшакан мелсене кăтартнă. Тĕслĕх конспект панă.*

***Тĕп сăмахсем***: *методика, сăвва пăхмасăр каласси, аслă ушкăнри ача.*

Ача садĕнче сăвăсене пăхмасăр калама вĕрентес тĕлĕшпе кĕçĕн ушкăнран пуçласах ятарласа ĕçлеме тытăнаççĕ. Чылай чухне килти аслисем те ку тĕлĕшпе самай хастар пулаççĕ. Вĕсем хăш чухне çине тăрсах пепкисене тĕрлĕ сăлтавпа сăвăсем пăхмасăр калама вĕрентеççĕ. Анчах ачасене сăвва кам та пулин умĕнче каласшĕн çеç пăхмасăр калама вĕрентнин усси сахалтарах. Шкулчченхи ачасене илемлĕ литературăпа паллаштарас ĕçре çак меслетĕн тĕллевĕ самай анлă пулмалла. Ăна ачана поэтика хайлавĕсене туйăмлă йышăнма, хаклама вĕрентессипе, унăн илемлĕх туйăмне аталантарассипе çыхăнтармалла.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Е.И. Тихеева лайăх сăвва кĕвĕпе танлаштарать. Сăвă урлă чи пĕчĕккисем те унăн ритмне туйма, йĕркисен янравĕпе, йĕркеленĕвĕпе киленме пултараççĕ тесе çирĕплетет.

Тĕпчевçĕсем сăввăн икĕ енне палăртаççĕ: унăн поэтика формипе ӳнер сăнарĕн содержанийĕ пуррине. Ачасене çак икĕ енне те пĕрлĕхлĕ йышăнма, ăнланма вĕрентмелле теççĕ. Çапла вара кĕçĕн çулхи ачасене сăвăлла хайлава йышăнма, аса хума вĕрентес тесен вĕсене унăн содержанине ăнланма, ӳнер формине туйма, харкам туйăмне палăртма вĕрентес тĕлĕшпе тимлесех ĕçлемелле пулать.

Сăвва пăхмасăр калама вĕренес тĕлĕшпе кашни ӳсĕмĕн хăй евĕрлĕхĕ палăрать. Тăваттăран кĕçĕнреххисене сăвва занятисенче ятарласа пăхмасăр калама вĕрентес тĕллев лартмаççĕ. Вĕсем хăйсене килĕшекен, шăл çемми сăвăсене тĕрлĕ ĕç-хĕлте нумай хутчен каланă майăн ас туса юлаççĕ. Ачасем пăхмасăр калакан сăвăсем содержани тĕлĕшĕнчен те, форми енчен те ансат пулаççĕ.

Вăтам ушкăнра меслетçĕсем ку тĕллевпе ятарлă занятисем ирттерме те пулать теççĕ. Ку ӳсĕмри ачасем кăткăсрах сăвăсене те ас туса юлма, асăмлама пултараççĕ. Ачасем ӳснĕçемĕн сăвăсене пăхмасăр калама вĕрентнĕ чухне ытларах вĕсем хайлава ăнланни, палăртуллă вулама пултарни çинче никĕсленмелле. Сăвăпа паллаштарнă майăн ăна ансаттăн тишкерсен, унăн ӳнер уйрăмлăхĕсене палăртсан татах та аван пулмалла. Çакă сăвва пăхмасăр каланă чухне ачасене унăн тĕп шухăшне, кăмăлне тĕрĕс палăртма пулăшать.

Аслă ушкăнри ачасен сăвва ас туса юлас, палăртуллă калас пултарулăхĕ чылай ӳсет. Халĕ вĕсем содержани тата калăпăш тĕлĕшĕнчен самай кăткăс сăвăсене те пăхмасăр калама пултараççĕ. Ĕç меслетлĕхĕ вăтам ушкăнри пекех юлать пулсан та ку çулхисене сăвă кăмăл-туйăмне ăша хума пулăшассине ытларах тимлеме пуçламалла. Вĕсене сăвăра сăнланнă ӳкерчĕксене куç умне кăларма пулăшмалла.

Шкулччехи ачасене сăвва пăхмасăр калама вĕрентессине ăнăçлă йĕркелес тесен меслетçĕсем чи малтанах çак пайрăмсене шута илме сĕнеççĕ.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Поэтикăлла текстăн содержанийĕпе форми.* Ку ўсĕмри ачасем уçăмлă сăнарсемлĕ сăвăсене ытларах кăмăллаççĕ. Вĕсем сăвва итленĕ майăн унăн ăшлăхне «ўкереççĕ». Çавăнпа уçăмлă содержанилле, çав вăхăтрах сăнарлă сăвăсене хăвăрт аса хываççĕ.

*Ĕçе мĕнле сăлтавласси.* Сăвва пăхмасăр калама çирĕп вĕрентес тесен чи малтан ачасен ас тата асăмлу уйрăмлăхĕсене шута илмелле. Асăмласси икĕ тĕрлĕ пулать: ятарлă тата ятарсăр. Кĕçĕн çулхи ача ятарлă асăмлассин тĕрлĕ мелĕсене пĕлеймест-ха, унăн ятарлă асăмласси маларах пырать: кăмăла кайни, мĕн тĕлĕнтерни унăн асне çăмăлрах кĕрсе вырнаçать. Ятарсăр асăмлу ытларах содержани ассоциацийĕсем çине тĕревленет, кăмăл-туйăм хусканăвĕсем те пулăшмаççĕ мар. Çапах та майĕпен ачасен ятарлă асăмлу процесне те хута ямалла. Тĕпчевçĕсем 4–5 çулхи ачасем майĕпен ятарсăр асăмлассипе пĕрлех ятарлă асăмласси çине те куçса пыма пултарнине палăртаççĕ. Кун пек чухне сăвва хăвăрт та çирĕп ас туса юласси çак ĕçе мĕнле сăлтавланинчен те чылай килет – мĕншĕн пăхмасăр вĕренмелле. Ача ытахальтен нимĕн те вĕренесшĕн мар. Ашшĕ-амăшне, ваттисене каласа парса савăнтарассишĕн пулсан вара, пачах та урăхла калаçу.

*Ачасен ўсĕм уйрăмлăхĕсем.* Кĕçĕн çулхи ачасем, вăл шутра аслă ушкăнрисем те, кĕске сăвăсене хăвăрт ас туса юлаççĕ. Çавăн пекех сăввăн сюжет аталанăвĕ динамикăллă, сăнарĕсем уçăмлă, текстра глаголсем ытларах пулсан вĕсем калăпăшĕпе пысăкрах сăвăсене те çăмăллăнах аса хывма, асăмлама пултараççĕ.

*Уйрăм ача материала мĕнле ăша хума пултарни.* Кашни ача пур тĕлĕшпе те хăйне евĕрлĕ, вăл шутра материала аса хурса асăмлассипе те. Пĕри хăвăрт ас туса юлать те час манать. Тепри вара майĕпен йывăррăн аса хурать пулин те çирĕп ас туса юлать. Ас тумалли материала пăхсан та пĕрне содержани тата форми тĕлĕшĕнчен пĕр тĕрлĕ сăвă шăл çемми, теприне – пачах та урăхли.

*Сăвва педагог туйăмлă, палăртуллă вуласа пама пултарни.* Сăвăпа паллаштарнă май педагог ăна сўрĕк, кичем каласа парсан тем пек тăрăшсан та ачасене унпа кăсăклантарса яма, пăхмасăр калама вĕренме хавхалантарма йывăр пулĕ.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Пăхмасăр калама вĕрентмелли ятарлă мелсене ăнăçлă усă курни.* Ĕçе ăнăçлăрах туса пырас тесен пăхмасăр калама вĕренмелли сăвăсене суйласа илнĕ чухне те тимлĕ пулмалла. Меслетçĕсем (Е.И. Тихеева) пăхмасăр калама вĕренмелли сăвăсене суйланă чухне çак самантсене шута илмеллине палăртаççĕ:

1) ритм ансатлăхĕпе уçăмлăхĕ;

2) сăвви хăй те, унăн йĕркисем кĕске пулмалли;

3) сăвăри сăнарсем уçăмлă, ачасем пĕлекеннисем пулмалли;

4) текст калăвĕн юххинчи сăнлав саманчĕсем ытла вăрăм пулмалла марри.

Теприсем тата çакăн çумне текст содержанийĕ ачасемшĕн кăсăклă пулмаллине, сăввăн ӳнер пахалăхне шута илмеллине те хушаççĕ. Шел пулин те, ытларах чухне сăвă суйланă май унăн темипе содержанине шута илеççĕ, пахалăхне ытлах тимлемеççĕ.

*Сăвва пăхмасăр калама вĕрентес йĕрке.* Сăвва пăхмасăр калама вĕренни икĕ пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă процесран тăрать: поэтикăлла хайлава йышăнса аса хуни тата ăна асăмласа палăртуллă калама пултарни.

Ачана сăвва тарăн йышăнма, унтан ăна аса хывса палăртуллă, ыттисем ăнланмалла каласа пама вĕрентесси педагогшăн самай кăткăс задача.

Хайлавăн содержанине хăйсем тĕллĕн уçăмлатасси те ачасемшĕн пур чухне те çăмăл мар. Вĕсене сăвăпа паллашма ятарласа хатĕрлени (словарь ĕçĕ, ӳкерчĕксене, çутçанталăкри пулăмсене сăнани, экскурсисем) вара çак ĕçе чылай çăмăлланать.

Çапла вара, сăвăсене пăхмасăр калама вĕрентнĕ чухне педагогăн икĕ задача татса памалла.

1. Ачасене сăвва çирĕп ас туса юлма пулăшасси, ăна чылай хушă асра тытас пултарулăхне аталантарасси.

2. Сăвва палăртуллă каласа пама вĕрентесси. Сăвва палăртуллă каласа парасси вăл – унăн шухăшĕпе вăл хускатакан кăмăл-туйăма итлекенсем патне уçăмлă тата витĕмлĕ çитерме пултарни. Палăртуллă каласа парас тесен сăвва тĕп-тĕрĕс, сăмахсемпе çаврăмсене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр каласа пама


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

пултармалла. Сиктерсе хăварни, пăтраштарни сăввăн формине пăсать, унăн шухăшне ăнланма чăрмантарать.

Палăртнă задачăсене иккĕшне те çуммăн пурнăçласа пымалла. Енчен те ачана малтан пăхмасăр вĕрентсе унтан кăна палăртуллă каласа пама вĕрентме хăтлансан ĕçе икĕ хутчен тумалла пулать. Тепĕр енчен илсен, сăвва пăхмасăр пĕлмесен, паллах, ăна палăртуллă калама вĕрентме пулмасть. Ачана текста пĕлменни чарса тăрать.

Меслетçĕсем (Е.И. Тихеева, Е.А. Флерина ) сăвва пăхмасăр калама вĕрентес ĕçе йĕркеленĕ майăн çаксене асра тытма сĕнеççĕ.

*Сăвва пăхмасăр калама уйрăмшарăн вĕренни ăнăçлăрах.* Пăхмасăр калама ушкăнпа вĕреннĕ чухне ачашăн текст шухăшне ăша хывасси, ун кăмăлне туйса илесси чăрмавлă. Ушкăнпа палăртуллă калама та йывăр. Ку ўсĕмри ачасен сăвва ушкăнпа калас пултарулăх йĕркеленсе çитмен-ха. Пăхмасăр калама ушкăнпа вĕреннĕ чухне вĕсем татса, пĕр майăн кăшкăрса калама хăнăхса пыраççĕ. Кунсăр пуçне, хăш-пĕр ача ушкăнпа каланă чухне сўрĕк пулать. Теприсене ушкăнпа сĕрлени хăвăрт ывăнтарать. Çавăнпа сăвва пăхмасăр калама ачасемпе уйрăмшарăн вĕренни ăнăçлăрах та, тухăçлăрах та.

*Сăвва пăхмасăр калама пĕтĕмĕшле вĕренмелле.* Пăхмасăр калама вĕренме калăпăшĕпе пысăках мар, содержани тĕлĕшĕнчен ансат сăвăсем суйласа илетпĕр пулсан вĕсене йĕркешерĕн мар, тўрех пĕтĕмĕшле пăхмасăр вĕренесси аслă ушкăнри ачасемшĕн шăл çемми пулмалла.

*Сăвва пĕр занятирех пăхмасăр калама вĕренсе çитме хистемелле мар.* Психологсем ку ўсĕмри ачасем сăвва çирĕп аса хывччăр тесен ăна хушăран хушă 8–10 хутчен те аса илсе калаттарма сĕнеççĕ. Ку ĕç йăлăхтармăш ан пултăр тата ăнăçуллăхĕ те ўстĕр тесен ăна тĕрлĕ самантсенче тĕрлĕ майлă йĕркелеме хушаççĕ: вăйăсенче, рольпе калани, выляса кăтартни тата ыт. те.

*Ачасен харкамлăх хăй евĕрлĕхĕсене шута илмелле.* Калăпăр, хăш-пĕр ача мĕн пĕчĕкренех сăвăсемпе кăсăкланса каймасть. Кун пеккисене хавас ритмлă, шўтлĕ сăвăсемпе илĕртме пулать. Именчĕкреххисемпе сăвă кĕввипе рифмине йышăнма чăрманса тăраканнисене вара уйрăм тимлемелле пулать.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Ача тавра поэзи уҫлӑхне йӗркелемелле, ӑна поэтика туйӑмӗпе витермелле.* Ача садӗнче те, ушкӑнра та, килте те ача тавра поэзи уҫлӑхне йӗркелеме тӑрӑшмалла. Чӑн-чӑн поэзин паха тӗслӗхӗсем кулленхи ӗҫ-хӗлре, уҫӑлса ҫӳренӗ чухне, экскурсисенче, вӑйӑ-кулӑра янрамалла.

Малалла сӑвва пӑхмасӑр калама вӗрентес тӗлӗшпе йӗркеленӗ ӗҫ тӗслӗхӗпе паллашма сӗнетпӗр.

*А. Барто ҫырнӑ* (*Р. Сарпи куҫарнӑ*) «*Вӑт епле пулӑшать*» *сӑвӑ*

*(Аслӑ ушкӑнри ачасемпеirttернӗ ӗҫ)*

*Ӗҫ тӗллевӗ:* ачасене А. Барто пултарулӑхӗпе малалла паллаштарасси, унӑн Р. Сарпи куҫарнӑ «Вӑт епле пулӑшать» сӑввине итлеттересси, ӑна аса хывма пулӑшасси.

*Кирлӗ материал:* «Игрушки. Теттесем» кӗнеке.

Ӗҫйӗрки

Воспитатель ачасене хӑй тавра пуҫтарать. Илемлӗ кӗнеке кӑтартать. Ун ҫинчен каласа парать.

Воспитатель. Ҫак кӗнекене паллӑ вырӑс ача-пӑча ҫыравҫи Агния Барто хайланӑ. Вӑл Мускавра ҫуралнӑ. Агни Барто пурӑннӑ чухне телевизорсем те пулман-ха. Самай вӑхӑт иртрӗ унтанпа. Анчах халӗ те Агния Бартона пурте пӗлеҫҫӗ. Унӑн кӗнекисене вулаҫҫӗ. Ача чухне Агния балерина пулма ӗмӗтленнӗ. Анчах ача-пӑча ҫыравҫи пулса тӑнӑ. Ун малтанхи сӑввисенех ачасем юратса вула пуҫланӑ. (Май пур пулсан «Йӗрекен хӗрача», «Ҫурт куҫса кайнӑ», «Тӑрлавсӑр упа ҫури», «Асаннен хӗрӗх мӑнукӗ» кӗнекесене кӑтартсан аван.) Эпир лайӑх пӗлекен сӑвӑсен ярӑмӗ «Теттесем» ятлӑччӗ. Аса илер-ха. Манса кайман-и эсир вӗсене? Эпӗ пуҫлӑп, эсир – вӗҫлӗр.

*Мишка*

Мишка ӳкрӗ урайне,
Суранлатнӑ... *(тяппине)*.
Упана эп хӗрхенетӗп,
Тяппине хамах... *(сиплетӗп)* [1, с. 2].

– Маттурсем, тепӗр сӑввине аса илер.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Вăкăр*

Вăкăр пырать сулланса,

Ассăн-ассăн... *(сывласа)*,

– Хăма çул вĕçне тухатăп,

Ай-ай-ай! Кĕç... *(йăванатăп)*! [1, с. 4].

– Грузовик» сăввине те аса илер-ха,

*Грузовик*

Грузовик хускатрăмăр,

Пиçуккана... *(лартрăмăр)*.

Ярăнасшăн мар Пиçук –

Тӳнсе кайрĕ... *(грузовик)* [1, с. 6].

– Агния Барто сăввисене нумай чĕлхене куçарнă. Паян эпир унăн Раиса Сарпи чăвашла куçарнă «Вăт епле пулăшать» сăввине итлĕпĕр.

*Вăт епле пулăшать*

Таньăн ĕçĕ сахал мар,

Таньăн ĕçĕ пит нумай.

Пулăшрĕ вăл шăллĕне,

Çирĕ унăн канфетне.

Ах, мĕн чухлĕ Таньăн ĕçĕ,

Таня çирĕ,

Таня ĕçрĕ.

Амăшпе пĕрле кăшт ларчĕ,

Асламăш патне уттарчĕ.

Ыйхăларĕ те каларĕ,

– Мана хăвăр салтăнтарăр,

Ывăнтăм. Тăрап аран.

Пулăшăп сире ыран [2, с. 44].

Воспитатель. Ачасем, сире, ку сăвă килĕшрĕ-и? Вăл: «*Таньăн ĕçĕ сахал мар»*, – тенинчен пуçланать. Айтăр-ха, Таня кун каçипе мĕн-мĕн тунине аса илер.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*(Сăввăн пуçламăш йĕркисене калать те малалла ачасене хăйсене аса илме хавхалантарать.)*

Таньăн ĕçĕ сахал мар,

Таньăн ĕçĕ пит нумай.

Ачасене Таня ĕçĕсене аса илме йывăр пулсан, воспитатель вĕсене ыйтусемпе пулашать. Ачасем калама пуçличчен сăввăн пуçламăш икĕ йĕркине тепĕр хут аса илтерет.

– Шăллĕ мĕн тунă? Таня ăна мĕнле пулăшнă?

Пулăшрĕ вăл шăллĕне,

Çирĕ унăн канфетне.

– Халĕ Таньăн ытти ĕçĕсене аса илсемĕр.

Воспитатель каллех хăй пуçлать те малалла ачасене калаттарать.

Воспитатель. Ах, мĕн чухлĕ Таньăн ĕçĕ...

Ачасем.

Таня çирĕ,

Таня ĕçрĕ.

Амăшпе пĕрле кăшт ларчĕ,

Асламăш патне уттарчĕ.

Воспитатель. Ачасем, халĕ выляса илер. Эпĕ автор вырăнне пулăп. Коля Таньăн шăллĕ пулĕ, Катя – Таня сăмахĕсене калĕ. Амăшĕпе аслашшĕ рольне кам вылясшăн?

Воспитатель палăртнă ачасене тухма ыйтать. Рольсемпе килĕшӳллĕн вырнаçтарать. Тĕслĕхрен, кунта шăллĕ ларĕ – акă «канфетсем» (кубиксем), кунта асламăшĕпе амăшĕ...

Йăлтах йĕркелесен сăвва вулать, ачасем выляса пыраççĕ.

Воспитатель çакнах тепре выляма сĕнет. Халĕ автор вырăнне сăвва лайăх ас туса юлнă ачана калама ыйтать.

Воспитатель. Вăт çакăн пек «ĕçлесе» Таня çав тери ывăнать – унăн хăй тĕллĕн хывăнма та вăй юлмасть. *(Сăввăн юлашки йĕркисене вулать, сасăпа Таньăн кăмăлне палăртма тăрăшать.)*


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Мана хăвăр салтăнтарăр,

Ывăнтăм. Тăрап аран.

Пулăшăп сире ыран.

– Ачасем, мĕнле шутлатăр, эпĕ Таньăн сăмахĕсене кирлĕ пек вулайрăм-ши? Тен, вĕсем çапларах янраççĕ. *(Маларах ывăнчăк туйăмпа вуланă йĕркесене ку хутĕнче савăнăçлăн, хыттăн янрататтарать.)*

Ачасемпе пĕрле çакăн пек интонаци тĕрĕс е тĕрĕс мар пулнине сӳтсе яваççĕ. Унтан воспитатель ку йĕркесене ачасене хăйсем мĕнле шутланă пек асăмлама ыйтать. Вĕсенчен чылайăшне калаттарма тăрăшать.

– Ну, ачасем, «Вăт епле пулăшать» сăвва ас туса юлайрăр-и? Халĕ эпĕ сăвва тепре вулăп, эсир тимлĕ итлĕр. Ас туса юлнă йĕркесене пĕрле каласа пырсан пит аван пулĕччĕ. *(Вулать. Ачасене калаттарать. Йывăрлансан пулăшса пырать.)* Çапла вара, эпир паян Агния Барто çырнă тепĕр сăвăпа паллашрăмăр. Ăна ас туса юлма тăрăшрăмăр. Сăвва килте аслисене каласа парса савăнтарăр. Пĕрле кулса илĕр. Килтисене сăвă килĕшни-килĕшменнине ыран каласа парăр.

Çапла вара ачасен сăвă итлес, аса хурас ыттисене каласа парас кăмăлне куллен аталантарса пымалла. Çак тĕлĕшпе падагогпа ашшĕ-амăшĕ алла-аллăн ĕçлемелле.

***Список литературы***

1. Барто А. Игрушки. Теттесем: стихи на чувашском и русском языках / перевод на чувашский язык Н.В. Ыдарая. – Чебоксары: Чувашское книжное издателльство, 2016. – 31 с.

2. Сарпи Р. Кам-ши эпĕ? – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1989. – 48 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)